**«Эс мана сăмах парсаччĕ…»**

Эс мана сăмах парсаччĕ
Ватăлсан килсе курмашкăн...
Кĕтрĕм-кĕтрĕм, сас памарăн.
Сăмаха, тен, манса кайрăн?
Е эп халь те çамрăк каччă,
Ватăлман та пуль эп саншăн?..

Тен, чĕнмесĕрех пырас ман,
Урампа иртсе пыруçăн
Тутартан ӳксе юлмасăр:
«Чашăк, çĕçĕ, кантăк хасăр
Лартса парăп!» – тес хыт саслăн,
Палласан, тен, алăк уçăн.

Асăмри яп-яшă вăхăт
Куçĕпе сана эп пăхăп:
Хĕр упраç эс, эп те каччă –
Ватăлман пек ĕмĕр каçăн!
...Пымасан та, килмесен те
Лайăхрах пуль тем тесен те.

*2010*

*Станьял, В. «Эс мана сăмах парсаччĕ...» / В. Станьял // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 425.*